27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
ИЮНЬ
17
ШАМАТКУН
119(6614) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Совет патриочӗсен пархатарлӑ ӗҫӗ

Совет ҫыннисем тӑван ҫӗршыва хӳтӗлекен мухтавлӑ Хӗрлӗ Сарӑн вӑйне те, укҫа-тенкине те шелленмест. Рабочисемпе инженерсем-техника работникӗсем, служащисем предприятисенче учрежденисенче хастарлӑн ӗҫлесе, колхозниксемпе колхозницӑсем уйхирӗсенче ҫине тӑрса ӗҫлесе, Хӗрлӗ Сар валли хӗҫпӑшалпа вӑрҫӑ техникине, апат-ҫимӗҫ, сапаласем ытларах парас тӗлӗшпе тӑрӑшаҫҫӗ. Кунпа пӗрле вӗсем Хӗрлӗ Сар валли вӑрҫӑ техникине ытларах тума хӑйсен укҫа-тенкине, перекетленӗ укҫа-тенке танксемпе самолетсем тума параҫҫӗ.

1942 ҫулта декабрь уйӑхӗнче Тамбов облаҫӗнчи колхозниксем «Тамбов колхозникӗ» ятлӑ танксен колонне тума 40 миллион тенкӗ укҫа пуҫтарчӗҫ. Вӗсем ҫак ҫулпа Сталин юлташа ҫыру ҫырса хӑйсен тӑван ҫӗршыва чӗререн парӑнни, Ленин—Сталин партине шанни ҫинчен ҫырчӗҫ. [illegible]

Совет ҫыннисем Тамбов облаҫӗнчи колхозниксен пархатарлӑ пуҫарӑвне хӗрӳллӗн ырларӗҫ. Саратов облаҫӗнчи Ново-Покровск районӗнчи «Стахановец» колхоз колхозникӗ Ферапонт Петрович Головатый пӗр боевой самолет илме 100.000 тенкӗ пачӗ. Унӑн ҫапла ырӑ примерӗпе пирӗн республикӑри нумай колхозниксем те кайрӗҫ. Хӗрлӗ Сар валли самолетсем илме укҫа пачӗҫ. Улатӑр районӗнчи «Красный луч» колхоз председателӗ Андрей Сарсков, Совет Союзӗн Геройӗ Федот Никитич Орлов ячӗпе самолет илме 100.000 тенкӗ пачӗ. «Красный пахарь» колхоз председателӗ Дубинин юлташ 100.000 тенкӗ пачӗ. [illegible] «Чӑваш Колхозникӗ» ятлӑ танк колонне, «Чӑваш Комсомолӗ» ятлӑ самолетсен эскадрилине тума укҫа пухнӑ.

Совет ӗҫҫыннисем тӑван ҫӗршыв укҫа-тенкипе тунӑ танксемпе самолетсем, хӗҫпӑшалсем нимӗҫ захватчикӗсене Сталинград патӗнче вӗҫлесе тӑкма, нимӗҫ-фашистсене пирӗн ҫӗршывран хӑваласа кӑларма пулӑшрӗҫ. [illegible]

Тӑван ҫӗршыва хӳтӗлес ӗҫре Ферапонт Петрович Головатый колхозник каллех ырӑ пример кӑтартрӗ. Вӑл Сталин юлташа ҫыру ҫырса тепӗр боевой самолет илме 100.000 тенкӗ пачӗ. [illegible] Ферапонт Головатый Сталин юлташ ячӗпе ҫыру ҫырса Хӗрлӗ Сар валли тепӗр самолет илме каллех укҫа пачӗ. [illegible]

Ферапонт Петрович Головатый ячӗпе Совет Союзӗн ӗҫҫыннисем тулли кӑмӑлпа ырласа йышӑнаҫҫӗ. Халӗ, Хӗрлӗ Сар тӑшмана пӗтерсе тӑмалли хӑвата ӳстерсе пыракан вӑхӑтра, пирӗн республикӑри нумай колхозниксем те Хӗрлӗ Сар валли танксемпе самолетсем тума укҫа-тенке пухаҫҫӗ. Мурхаш районӗнчи «Красное Сормово» колхоз председателӗ Петр Майоров, Сергей Соловьев колхозник, Совет Союзӗн Геройӗ Ф. Н. Орлов валли самолет илме 100.000 тенкӗ пачӗҫ. Бригадир Ефим Смелова колхозник [illegible] Василий Волков Совет Союзӗн Геройӗ Б. М. Васильев ячӗпе самолет илме 100.000 тенкӗ пачӗ. Куславкка районӗнчи Иван Хузяханов 10.000 тенкӗ пачӗ. [illegible] «...Манӑн укҫа танксемпе самолетсем тума пулӑштӑр» [illegible]

Хӗрлӗ Сар валли боевой техника тума укҫа-тенке парас ӗҫ [illegible]

Мухтавлӑ Хӗрлӗ Сар совет патриочӗсен укҫипе тунӑ танксемпе самолетсем ҫинче тӑшмана ҫапса аркатать. [illegible]

Совет Информаци Бюровӗнчен

ИЮНӖН 15-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Карели перешеекӗнче ЛЕНИНГРАД фрончӗн ҫарӗсем, наступление вӑйлатса пырса, МУСТАМЯКИ — КУТЕРСЕЛЬКЯ районӗнче финсен нумай вӑхӑтлӑха вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ иккӗмӗш оборона тӑрӑхне татнӑ. Фронт ҫарӗсем июнӗн 15-мӗшӗнче тӑшман оборонин вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ ҫак опорнӑй пункчӗсене туртса илнӗ: МУСТАМЯКИ, КАННЕЛЯРВИ, СЮКИЯЛЯ, НАУВОЛА, ВАММЕЛЯРВИ, РАСВАТТУ, МЯТСЯКЮЛЯ, ЛАУТАРАНТА, ИНО ФОРТНЕ, ИНОНКЮЛЯ, МАРТТИЛАНМЯКИ, ХИЕККАНИЕМИ, СИРКИЯНСАРИ, ЛЕППЯСЕНМЯКИ, ТРОИЦКОЕ, РИСТОЛОВО, МАЛОЕ КАЙДАЛОВО тата ҫак чугун ҫул станцийӗсене йышӑннӑ: МУСТАМЯКИ, ИНО.

Ултӑ кун хушши наступлени туса пырса, Ленинград фрончӗн ҫарӗсем финсен нумай вӑхӑтлӑха вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ икӗ оборона тӑрӑхне татнӑ, 40 километр таран малалла кайнӑ, татса кӗнӗ вырӑн анлӑшне 75 километр таран сарнӑ. Тӑшманӑн пӗррӗмӗшпе иккӗмӗш оборона тӑрӑхне татса, фронт ҫарӗсем нумай вӑхӑтлӑха тунӑ 500 оборона сооруженине пӗтерсе тӑкнӑ е тытса илнӗ, танксене тата пехотӑна хирӗҫ тунӑ чӑрмавсен (эскарпсен, шӑтӑксен, надолбӑсен) виҫӗ хӑватлӑ тӑрӑхӗ урлӑ тата шалалла инҫене каякан мина хирӗсем урлӑ каҫнӑ. Тӑшманӑн иккӗмӗш оборона тӑрӑхӗнче хирӗҫ тӑмалли виҫӗ узелта кӑна (МУСТАМЯКИ, КУТЕРСЕЛЬКЯ, САХАКЮЛЯ) тупӑсемпе пулеметсем валли тимӗрпе бетонран тата бреньӑран тунӑ 50 сооружение ытла тытса илнӗ.

Малтанлӑха палӑртнӑ тӑрӑх, 5 кун хушшинчи наступленире, июнӗн 10-мӗшӗпе 14-мӗшӗ хушшинче, фронт ҫарӗсем ҫакӑн пек трофейӑсем тытса илнӗ: тӗрлӗ калибрлӑ тупӑсем — 235, минометсем — 180, пулеметсем — 400. Унсӑр пуҫне тата тӗрлӗ калибрлӑ 200 тупӑ ытла, 450 пулемет ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Тӑшмана ҫынсем тӗлӗшпе питӗ пысӑк ҫухатусем тӳстернӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче улшӑнусем пулман.

Июнӗн 14-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 12 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

ПИРӖН АВИАЦИ ТӐШМАН АЭРОДРОМӖСЕМ ҪИНЕ БОМБАСЕМ ПӐРАХНИ

Июнӗн 15-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн инҫене вӗҫекен авиаци тӑшман аэродромӗсене йышлӑн вӗҫе-вӗҫе кайса тапӑннӑ. Нимӗҫсен **Белосток, Барановичи, Лунинец** районӗсенчи аэродромӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Бомбӑсем пӑрахнине пула вӑйлӑ пушарсем тухнӑ, пушарсенче взрывсем пулнӑ. Нимӗҫ самолечӗсем тата горючи склачӗсем ҫуннӑ.

Пирӗн 3 самолет хӑйсен базисене таврӑнман.

☆ ☆ ☆

Карели перешеекӗнче пирӗн ҫарсем Мустамяки — Кутерселькя районӗнче финсен вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ иккӗмӗш оборона тӑрӑхне татнӑ, унта вӗсен нумай вӑхӑтлӑха хатӗрлесе лартнӑ сооруженисем тап-тулли пулнӑ. Пӗр соединени ҫарӗсем пӗр хӑватлӑ опорнӑй пунктшӑн пынӑ ҫапӑҫусенче кӑна финсен пехотине пӗр полка ҫити аркатса тӑкнӑ. Тыткӑна нумай илнӗ.

Хӗрлӗ Сар боецӗсемпе офицерӗсем Карели перешеекӗнче пыракан ҫапӑҫусенче паттӑрлӑхпа геройлӑх кӑтартаҫҫӗ. Ултӑ гвардеец, гварди старшини Дубнов ертсе пынипе, пирӗн ҫапӑҫури ретсене персе тӑракан гаубица батарейине курнӑ. Гвардеецсем тӑшман тылне тухнӑ та сасартӑк финн артиллеристчӗсене тапӑннӑ. Автоматсемпе персе тата гранатӑсем вӑркӑнтарса, пирӗн боецсем темиҫе вунӑ ҫынна пӗтерсе тӑкнӑ, 4 юсавлӑ тупӑ тата боеприпас складне тытса илнӗ. Тӑшман контратакине сирсе янӑ чухне пулеметчиксем — гварди рядовойӗ Безноживин тата гварди старшин сержанчӗ Шилов 40 бефина вӗлернӗ. Снайпер Изосимов вӑрмана йӗрлесе тухнӑ чухне 5 финна тӗл пулнӑ. Изосимов ҫавсенчен иккӗшне персе вӗлернӗ, виҫҫӗшне тыткӑна илнӗ. Танкист старши лейтенант Струченков финсен икӗ дзотне, 4 пулеметне пӗтерсе тӑкнӑ тата тӑшман салтакӗсене пӗр взвод ытла вӗлерсе пӗтернӗ. Сапер-старшина Катаев икӗ кун хушшинче 1.000 мина ытла сиенсӗрлетнӗ.

Пирӗн авиаци, Ленинград фрончӗн ҫарӗсен наступленине пулӑшса пырса, финсен оборона сооруженийӗсене, артиллери позицийӗсене тата ҫулӗсене йышлӑн вӗҫе-вӗҫе пырса ҫапнӑ. Пирӗн летчиксем кун каҫиччен чугун ҫул эшелонне сирпӗнтерсе янӑ, 10 дзот ишсе антарнӑ, 80 автомашинӑна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ тата тӑшманӑн 24 артиллерипе минометсен батарейине пусарса лартнӑ.

* * *

Пирӗн торпедӑсем пӑрахакан самолет финн заливӗнче нимӗҫсен 1.500 тонна таякан суднине шыва путарнӑ.

* * *

Витебск хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнелле разведчиксен ушкӑнӗ, Богачев лейтенант командир пулса ертсе пынипе, тӑшман позицийӗсене атакӑланӑ. Пирӗн боецсем тӑшман траншейӗсене вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ та, штык вӗҫҫӗн ҫапӑҫса, 25 нимӗҫе вӗлернӗ. Разведчиксем траншейӑри блиндажа сирпӗнтерсе янӑ, пӗр тупӑ пӗтерсе тӑкнӑ, пӗр нимӗҫе тыткӑна илнӗ, вара хӑйсен чаҫне таврӑннӑ.

* * *

Станислав хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнелле тӑшман, артиллери пулӑшнипе

* * *

Дрогобыч облаҫӗнче кӗрешекен партизансем май уйӑхӗ вӗҫӗнче темиҫе нефть вышкине тата 15 резервуар ҫунтарса янӑ, ҫав резервуарсенче 3.000 тоннӑна яхӑн нефть пулнӑ. Нефть промыслӗсенчи пушар икӗ кун хушши пынӑ. Чугун ҫулсем тӑрӑх кӗрешсе ҫӳрекен партизансен ушкӑнӗ майӑн 28-мӗшӗпе 31-мӗшӗ хушшинче нимӗҫсен 6 ҫар эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ. Ҫав крушенисенче тӑшман салтакӗсем нумай вилсе е аманса пӗтнӗ.

* * *

Хӗрлӗ Сар енне румынсен чугун ҫулсем хуралакан уйрӑм батальонӗнчи салтаксен ушкӑнӗ каҫнӑ. Ҫавсенчен пӗри Павел Л. ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Нимӗҫсем хӑйсем Румынире нумайччен хуҫа пулса пурӑнас суккине ӑнланса илме пуҫларӗҫ пулмалла. Вӗсем Румынирен хӑвартрах апат-ҫимӗҫ, чӗр-тавар тата нефть ытларах кӑларса кайма васкаҫҫӗ. Халӑх нимӗҫсене питӗ курайманнине, вӗсене уҫҫӑнах вӑрӑ-хурахсем тет. Чугун ҫул тӑрӑх сыхласа ҫӳресе, эпир рельссем ҫинче час-часах пӗрене е чул куписем кураттӑмӑр. Ҫакна сывӑхри ялсенчи ҫынсем нимӗҫсен поезчӗсене ӳпӗнтерсе яма, ҫаратнӑ пурлӑха Германие турттарса каяссине чарма тӑватчӗҫ. Чылай районсенче «симӗс батальонсем» ятлӑ партизан отрячӗсем кӗрешеҫҫӗ. Чи малтан ҫав батальонсем 1942 ҫулта курӑнма пуҫларӗҫ. Куҫ кӗретех килекен вилӗмрен хӑтӑлма тӑрӑшса, салтаксем фронта таратчӗҫ, вара вӗсем вӑрмансене е Ардялапа Баната тӑвӗсем ҫине каятчӗҫ. Хӑшпӗр батальонсем лайӑхах хӗҫпӑшалланнӑ. Вӗсем нимӗҫсене нумай чӑрмавсем кӳреҫҫӗ. Полиципе жандармерин пӗчӗкрех отрячӗсем партизансене нимӗн тума та пултараймаҫҫӗ».

Танксемпе самолетсем тума

ИШЛЕЙ, июнӗн 16-мӗшӗ. (**Телефонпа**). Районри колхозсенче Ферапонт Головатый примерӗпе Хӗрлӗ Сар валли вӑрҫӑ техникин тума укҫа-тенкӗ пухасси сарӑлсах пырать. Нумай колхозниксем темиҫе сӗршер, пиншер тенкӗ параҫҫӗ.

«Активист» колхоз председателӗ Трофимов, ҫав колхозри бригадир Иванов, колхозник Григорьев юлташсем 1000-шер тенкӗ панӑ. Ҫавӑн пекех «11 лет Чувашии» колхоз председателӗ Ильин, конюх Майоров юлташсем те пиншер тенкӗ хывнӑ.

Г. СЕРЕБРЯКОВ.

* * *

Якунин юлташ главнӑй инженер пулса ӗҫлекен заводри рабочисемпе инженерсем-техникла работниксем тата служащисем тӑван ҫӗршывӑн патриочӗ Ферапонт Головатый юлташ чӗнсе калинине тулли кӑмӑлпа йышӑнчӗҫ. Халӗ пур цехсенче те Хӗрлӗ Сар валли танксемпе самолетсем тума укҫа пухасси пырать.

Механически цех коллективӗ 7.725 тенкӗ укҫа, 13.750 тенкӗлӗх облигацисем панӑ тата уҫӑ курман отпуск укҫине 10 пин тенкӗ ытла хывнӑ. Нумай рабочисем темиҫе сӗршер тенкӗ параҫҫӗ.

Июнӗн 15-мӗшӗ тӗлне завод коллективӗ укҫан тата облигацисем пурӗ 225 пин тенкӗ ытла пухса пама сырӑннӑ.

Колхоз уйхирӗсенче

УБОРКӐНА ТУХМА ХАТӖР

КАНАШ, июнӗн 16-мӗшӗ. (**Телефонпа, хамӑр корр.**). Маякри «Новая жизнь» колхоз (председателӗ Майоров юлташ) кӑҫал сухакине 9 кун хушшинче вӗҫленӗ. 83 гектар акас вырӑнне 96 гектар тӗштырӑсем акнӑ. Унтан юнашар колхоза кайса 7 гектар сухаласа панӑ. Колхоз районра малти вырӑна тухнӑ. Фронтовиксен ҫемьисене чылайӗшне ҫӗрулмипе пахча-ҫимӗҫ вӑрлӑхӗсем парса пулӑшнӑ.

Акнӑ калчасем лайӑх шӑтса пӗтни вӑйлӑ тырпул пуласса шантараҫҫӗ. Халӗ сум ҫумланӑ ҫӗрте кашни кун 30 ҫын ӗҫлет. Паянхи куна 50 гектар ытла тырпула ҫумкурӑксенчен тасатнӑ. Ҫӗртме сухи тумалли вырӑна тислӗк тӑкаҫҫӗ. Кунсерен 8-шар лашапа 16 ҫын тислӗк тӑкаҫҫӗ. Халӗ 1000 лав ытла тӑкнӑ.

Ҫавсемпе пӗрлех колхоз уборкӑна та тӗрлӗпе тӗлӗшпе те чылай ӗҫсем тунӑ. Кӗреплелелӗ ҫавасем 20 штук хатӗрленӗ тата жнейкӑсемпе косилкӑсене те юсаса хатӗрленӗ. Уборкӑна пӗтӗмпе 120 ҫын хутшӑнать. Колхозниксем кӗҫех утӑ сулма тухаҫҫӗ. Колхозӑн 40 гектар клевер, 20 гектар улӑх утти сулмалла. Ку ӗҫе пӗтӗмпе 40 ҫын тата тепӗр косилка хутшӑнать. Халӗ 45 ҫава юсанӑ, 40 штук лапатка илсе хатӗрленӗ. Ҫавасем тунтас тӗлӗшпе колхоз председателӗ Майоров хӑй ӗҫлет. Ӗҫ вӑхӑтӗнче те ҫавасене хирех тухса туптаса парас тесе, вӑл куҫса ҫӳрекен сунтал хатӗрленӗ.

С. ШАДИН.

Малти колхозсенче

— Кӑҫал эпир хамӑр умма гектартан 100 пӑтран кая мар тӗштырӑ, 150 центнер пахча-ҫимӗҫ туса илес задача лартрӑмӑр, — тет Муркаш районӗнчи «Крестьянин» колхоз председателӗ Михаил Иванович Вязов.

«Крестьянин» колхоз членӗсем кӑҫал нихҫанхинчен те вӑйлӑ тырпулпа пахча-ҫимӗҫ туса илессишӗн кӗрешеҫҫӗ. Паянхи куна колхоз уйхирне 2400 лав тислӗк кӑларчӗ. Кӗрхи калчасемпе суртрӑрисене ҫумкурӑксенчен тасатнӑ. Е. Коротковӑпа И. Садовников юлташсем ертсе пыракан бригадӑсем пур ӗҫе те тӗплӗн туса, ӗҫре пахалӑх тӗслӗхӗсем кӑтартаҫҫӗ. Ирхи ҫӗртме тунӑ ҫӗрте П. Смирнова, А. Кожевникова, М. Вязова юлташсем ӗҫ нормине ирттерсе тултараҫҫӗ. Ҫак кунсенче колхоз ирхи ҫӗртме туса пӗтерет. Кунта уборкӑна хатӗрленес тӗлӗшпе тумалли ӗҫсем те аван пыраҫҫӗ. Ҫак кунсенче ҫавасем валли 28 кӗрепле хатӗрленӗ, 1 жнейка юсанӑ. Тырӑ вырнӑ вӑхӑтра пӗрле апатланмалли столовӑй пулать.

Мухтавлӑ Хӗрлӗ Сарӑн чаплӑ ҫӗнтерӗвӗсем ҫине колхоз членӗсем ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерсе пынипе ответлеҫҫӗ.

Ф. МАЛЫШКИН.

* * *

ИШЛЕЙ. «МОПР» колхоз сухаки планне районра чи малтан тултарчӗ. Кунта суртрӑри калчисем питӗ лайӑх ситӗнеҫҫӗ. Колхозниксем вӗсене ҫумкурӑксенчен тасатсах тӑраҫҫӗ. Колхозра халӗ ҫӗртме пуссине тислӗк кӑлараҫҫӗ, ҫийӗнчех сухаласа пыраҫҫӗ.

«МОПР» колхозӑн пӗҫе ӗҫсене ырласа, нумай колхозсем ҫӗртме пуссине тислӗк кӑларас тӗлӗшпе лайӑх ӗҫлеме тытӑнчӗҫ. Ишлей ялсоветӗнчи «1-ое августа», «Сӗр хурнай» колхозсем уя куллен виҫӗ лашапа тислӗк турттараҫҫӗ, ҫӗртме сухине те пикенсех тӑваҫҫӗ.

«Красный воин» колхозра тыра вырма кирлӗ таран ҫурласем шӑлласа хунӑ.

Г. СЕРЕБРЯКОВ.

Тырӑсене ҫумкурӑксенчен тасатаҫҫӗ

КУСЛАВККА. Колхозсем кӑҫал вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн пӗтӗм вӑя хурса кӗрешеҫҫӗ. Суракине ӑнӑҫлӑн вӗҫленӗ «13 год Октября», «16 партсъезд», «Правда», «Красноармеец», «Динамо» тата ытти колхозсем те кӳршӗри юлса пыракан колхозсене пулӑшрӗҫ.

Халӗ колхозсем тырӑсене ҫумкурӑксенчен тасатма тытӑнчӗҫ. «Правда» колхозра (председателӗ Тимофеев юлташ) 120 гектар ҫум ҫумланӑ, клевера та ҫумкурӑксенчен тасатнӑ. «13-й год Октября» колхоз калчасене пӗтӗмпех ҫумкурӑксенчен тасатнӑ. «Красная Чувашия» колхозра суртрӑрисене тислӗкпе тата ытти удобренисемпе апатлантараҫҫӗ.

«Правда» колхозра ҫум ҫумлас ӗҫе шкул ачисемпе пионерсем йышлӑн хутшӑнаҫҫӗ. Кунта кашни бригадӑрах 30—40 ача ӗҫлет.

И. ШАРКОВ.

Ҫӗртме тӑваҫҫӗ

ЭЛӖК, июнӗн 15-мӗшӗ. (**Телефонпа**). Районри колхозсем сухаки планне тултарнӑ хыҫҫӑнах ҫӗртме сухине массӑллӑн тума тытӑнчӗҫ. Паянхи куна 1.018 гектар сухаланӑ. «Трактор», «Канаш», Горький ячӗпе тӑракан колхозсем ҫӗртме сухине лайӑх сухалаҫҫӗ. Вӗсем 10—18-шар гектар сухаланӑ. Колхозниксем хӑйсен килкартийӗсенчи мӗнпур тислӗке, ҫавӑн пекех тата тӗрлӗ удобренисене пӗтӗмпех ҫӗртме пуссине турттараҫҫӗ.

Ҫуракинче тухӑҫлӑ та лайӑх ӗҫленӗшӗн, Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗпе ВКП(б) Обкомӗн ялхуҫалӑх отделӗ тӑратнӑ тӑрӑх, ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри Хисеп Хӑми ҫине кӗртнӗ:

68. **Куславкка МТС-ӗ** (директорӗ **А. Л. Лаврентьев** юлташ, парторганизаци секретарӗ **И. Т. Тарасов** юлташ, старши механик **П. П. Митрофанов** юлташ). МТС сурхуне тракторсемпе тумалли ӗҫсен планне 124 процент тултарнӑ, 3260 гектар вырӑнне 4.018 гектар сухаланӑ тата горючи 190 килограмм перекетленӗ.

Чи лайӑх бригадирсем: К. П. Антонов, унӑн бригади сурхунне тракторсемпе тумалли ӗҫсен планне 182,3 процент тултарнӑ, 560 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ; **В. В. Мясников,** унӑн бригади плана 165 процент тултарса 1.017 килограмм горючи перекетленӗ; **К. В. Осин,** унӑн бригади сурхунне тумалли ӗҫсен планне 135 процент тултарнӑ, 263 килограмм горючи перекетленӗ.

Чи лайӑх тракторисчӗсем: М. Д. Гаврилов — сурхунне тумалли ӗҫсен планне 369 процент тултарнӑ, 367 килограмм горючи перекетленӗ; **П. Л. Афанасьева** — сурхуннехи ӗҫсен планне 257 процент тултарнӑ, 150 килограмм горючи перекетленӗ; **М. М. Елков** — сурхуннехи ӗҫсен планне 238 процент тултарнӑ, 70 килограмм горючи перекетленӗ.

Ҫуракинче тухӑҫлӑ та лайӑх ӗҫленӗшӗн ӗҫҫынни депутачӗсен Советни райсовечӗн исполкомӗпе ВКП(б) райкомӗ тӑратнӑ тӑрӑх, ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри Хисеп Хӑми ҫине кӗртнӗ:

69. **«Новая жизнь»** колхоз (колхоз председателӗ **Г. Е. Ефремов** юлташ). Колхоз — суракине майӑн 25-мӗшӗ тӗлнех вӗҫленӗ, ҫӗрулми лартмалли, техникӑллӑ культурӑсемпе пахча-ҫимӗҫ акмалли плана ӑнӑҫлӑн тултарнӑ, сураки планне 102,5 процент пурнӑҫланӑ.

Суракинче уйрӑмах ҫак сухаҫӑсем малта тухнӑ: **А. П. Петров, М. Р. Иванов, Н. П. Павлова, М. Иванова.** Вӗсем кашни кунах кулленхи нормӑна 120-шар процента ҫити тултарса пынӑ. Акакансем: **А. Никифоров, Р. Иванов, Трофимов, Еремеев** — кулленхи нормӑна 115 процентран пуҫласа 120 процента ҫити тултарнӑ.

Т. С. Степанов юлташ ертсе пыракан трактор бригади ҫулталӑкри плана 102,1 процент тултарнӑ

Ҫӗрпӳ МТС-ӗнчи 10-мӗш номерлӗ трактор бригадин (бригадирӗ Т. С. Степанов юлташ) кӑҫал тракторсемпе план тӑрӑх 1120 гектар сухаламалла. Июнӗн 15-мӗшӗ тӗлне 1.144 гектар сухаласа вӑл плана 102,1 процент тултарнӑ, 1900 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ.

Ҫӗрпӳ МТС-ӗ,
10-мӗш номерлӗ трактор бригадин бригадирне Т. С. СТЕПАНОВА

Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗ Сире тата сирӗн бригадӑн пӗтӗм коллективне эсир питех те чаплӑ ҫӗнтерӳ тунӑ ятпа — трактор ӗҫӗсен ҫулталӑкри планне тултарнӑ ятпа саламлаҫҫӗ. Сирӗн бригада ирхи ҫӗртме тӑвас тата тырпулсене уйхиртен пухса кӗртес задачӑсене те ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртӗ тесе ҫирӗппӗн шанса тӑратпӑр.

ЧАССР Совнаркомӗн председателӗ А. МАТВЕЕВ. **ВКП(б) Обкомӗн секретарӗ И. ЧАРЫКОВ.**

Вӑйлӑ тырпулшӑн малалла кӗрешетпӗр

ҪӖРПӲ, июнӗн 16-мӗшӗ. (**Телефонпа**). Суракинче пирӗн районри колхозсем аван ӗҫлерӗҫ. Тырӑсем тикӗс шӑтса, лайӑх ӳсеҫҫӗ, вӗсем ҫинчи ҫумкурӑксене колхозниксем тасатсах тӑраҫҫӗ. Ҫум ҫумланипе пӗрлех, колхозсем ҫӗртме пуссине тислӗк турттараҫҫӗ. Паянхи кун тӗлне уя 109.230 лав тислӗк кӑларнӑ, ҫапла вара плана 100,2 процент тултарнӑ. Халӗ нумай колхозсем пикенсех ҫӗртме тӑваҫҫӗ. «Новая жизнь» колхоз (председателӗ Романов юлташ) 50 гектар ытла ҫӗртме тунӑ, «8-ое марта» колхоз — 48 гектар, «Коминтерн» колхоз — 43 гектар, «Красный герой» колхоз — 30 гектар ытла сухаланӑ. Районӗпе июнӗн 15-мӗшӗ тӗлне 1300 гектар ҫӗртме туса, плана 23 процент тултарнӑ.

Ҫӗртме ӗҫне татах та ытларах хӑвартлатма пур майсем те пур. Суракинче юлса пынӑ «Красный пахарь», «Звезда», колхозсем тата Ойкассинчи Калинин ячӗпе тӑракан колхоз ҫӗртме тӑвас ӗҫе ҫак вӑхӑта ҫитсе те тытӑнман. Кунта лашасем канчӑр-ха тесе лараҫҫӗ тата уя тислӗк турттарса пӗтермен ҫине йӑвантараҫҫӗ. Уя тислӗк тӑкса пӗтересине кӗтмесӗрех ҫӗртме тума тытӑнмалла, уя кӑларнӑ тислӗке ҫийӗнчех витсе хӑвармалла. Мӗншӗн тесен тислӗке саланӑ хыҫҫӑнах сухаламасан, вӑл типсе хӑйӗн пахалӑхне ҫухатать.

Ҫак ӗҫсемпе пӗрлех, колхозсем тырпул пухса кӗртме те хатӗрленеҫҫӗ. Утӑ сулма районра пурӗ 34 сенокосилкӑран 24-шне юсанӑ, вӗсем ӗҫе тухма хатӗр. Нумай колхозсем кӑҫал утта ҫавапа сулаҫҫӗ. Ҫавасем ҫителӗклӗ, халӗ вӗсене туптаҫҫӗ; кӗреплесем, сенӗксем те ҫителӗклӗ хатӗрленӗ. «Новая жизнь» колхоз паян ыран утӑ сулма тытӑнать. Кунта пурӗ 130 гектар утӑ сулмалла. Колхозниксем утӑ сулма хатӗр, кирлӗ инвентарьсем ҫителӗклӗ. Июнӗн 20-мӗшӗ тӗлне районри пур колхозсем те утӑ сулса пухма тытӑнаҫҫӗ.

Л. АНИСИМОВ,
Райҫӗрӗҫ пайӗн агрономӗ.

Уравӑшри ҫамрӑксем

...Ҫав каҫхине колхоз председателӗ Яков Василич та киле каймарӗ, колхоз канцелярийӗнчех канчӗ. «Вӑхӑт хаклӑ! Ыран ирех тӑрса бригадӑсене каймалла, ӗҫе кам мӗнле тухнине сӑнамалла», — шухӑшларӗ председатель.

Анчах председатель йӑнӑшрӗ. Ирхине ирех, вӑл тӑриччен, ун патне пырса алӑкран шаккарӗҫ.

— Сухалама каяс тетпӗр, юрать-ши? —илтӗнчӗ сасӑ.

Председатель малтанлӑха тӗлӗнме пӑхрӗ. «Еплерех-ха, тӗттӗм вӗт, тул ҫутӑличчен килни те курӑнмасть». Ҫапах председатель килӗшрӗ.

...Вӗсем, колхоз канцелярине пынӑскерсем — Уравӑшри «1-ое Мая» колхоз ҫамрӑкӗсем: Георгий Амбросьев, Миша Сидюхин тата Миша Яковлев. Суракине тухас умӗн колхоз правленийӗ вӗсене вӑйлӑ тырпул туса илес тӗлӗшпе ӗҫлекен звенисене ертсе пыма уйӑрнӑ. Суракинче пурте вӗсем сухаҫсем, акакансем пулса ӗҫлерӗҫ. Акан малтанхи кунӗсенчех ҫамрӑк колхозниксем нормӑна 115—150 процент тултарса пычӗҫ. Ӗҫ пахалӑхӗ пурин те лайӑх.

«1-ое Мая» колхозра кӑҫал вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешме 16 звено организациленӗ. Вӗсене пурне те тенӗ пекех ҫамрӑксем ертсе пыраҫҫӗ. Сураки вӑхӑтӗнче уйрӑмах Сидюхин, Яковлев тата Андриянов юлташсен звенисем малта пычӗҫ. Вӗсем хӑйсене ҫирӗплетсе панӑ участоксенчен кӑҫал 50-шар центнер тырӑ туса илессишӗн кӗрешеҫҫӗ.

Вӑйлӑ тырпул туса илес тесен, пӗтӗм ӗҫе агротехника хушнӑ пек туса пымалла. Ӑна уравӑшсем лайӑх пӗлеҫҫӗ. Ҫавӑнпа кӑҫал вӗсем уя пиншер лав тислӗк кӑларчӗҫ, калчасене кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗпе, тӗрлӗрен имҫамсемпе апат парчӗҫ, суракинче лайӑх вӑрлӑх тата яровизациленӗ акрӗҫ. Пур вырӑнта та сухана 17 сантиметртан ӑшӑх мар сухаланӑ, ҫӗрӗн чылай пайне хӑйсем урӑхлатса тунӑ ретлӗ сеялкӑсемпе акнӑ.

Ӗҫӗн результачӗ халь кӑҫ умӗнчех: пур вырӑнсенче те тырӑсем лайӑх, пӗр тикӗс шӑтса тухрӗҫ.

Уравӑшсем кӑҫал гектартан 17 центнертан кая мар тӗштырӑ, 150 центнер ҫӗрулми, 200 центнер пахча-ҫимӗҫ туса илме сӑмах панӑ. Ӑна пурнӑҫлассишӗн халь кӗрешӳ анлӑн сарӑлса пырать. Ҫав кӗрешӗре уйрӑмах ҫамрӑк колхозниксемпе комсомолецсем пример кӑтартаҫҫӗ.

Х. ЛИСИН.
(Хамӑр корр.).

ВӐРНАР.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

ЧĂВАШ АСС РЕСПУБЛИКИНЧИ ПРОМЫСЛА КООПЕРАЦИ АРТЕЛĔСЕН СОЦИАЛИЗМЛА АМАРТĂВĔН УСЛОВИЙĔСЕНЕ КАШТАХ УЛАШТАРАССИ ÇИНЧЕН

РСФСР Совнаркомĕ тата ВЦСПС 1944 çулхи майăн 9-мĕшĕнче «РСФСР-ти промысла кооперацин артелĕсен социализмла ăмăртăвĕн условийĕсене каштах улăштарасси çинчен» постановленипе пăхнă. Чăваш АССР Совнаркомĕ промысла кооперацин артелĕсене панмалли премисен виçине çак чухлĕ тума йышăнчĕ:

Куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялава çĕнсе илекен артельсене пама хĕр премии пулать. ... 100 çынтан ытларах ĕçлекен артельсене — 10,000 тенкĕ, 50 çынтан пуçласа 100 çынна çитиччен ĕçлекенсене — 6.000 тенкĕ пулмалла.

Уйăхри пама кĕр преми тунă. Вĕсен хисепĕ артельте 100 çын ĕçлесе пулсан — 5.000 тенкĕ, 50 çынтан пуçласа 100 çын таран ĕçлесе пулсан — 4.000 тенкĕ тата 50 çын таран ĕçлесе пулсан — 3.000 тенкĕ пулать.

Чугун çул работникĕсен кунĕ умĕн

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводри пур цехсенче те чугун çул работникĕсен кунне хатĕрленесси анлăн сарăлса пырать. Рабочисемпе инженерла-техникла работниксем тата служащисем Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне сÿтсе-явнă хыççăн илнĕ обязательствăсене срокчен пурнăçлама тăрăшаççĕ.

Забнякин юлташ начальник пулса ĕçлекен цех коллективĕ май уйăхĕнчи плана 103,3 процент тултарнă. Икшер станокпа ĕçлекен стахановецсем Д. Домбровская тăватă норма, П. Черняя виçĕ норма çурă, тăватă станокпа ĕçлекен В. В. Кучинина, виçĕ станокпа ĕçлекен С. Будкина юлташсем тăватшар норма тултарнă. Жебрак юлташ начальник пулса ĕçлекен цех та май уйăхĕнчи плана ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕ. Нумай цехсем хăйсен ĕçне лайăхлатнă.

Завод коллективĕ, шутсăр нумаях пулмасть, чугун çул работникĕсен кунне çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илме пулса, обязательство йышăннă. Рабочисемпе инженерла-техникла работниксем, служащисем производство планне ирттерсе тултарма, нумай станокпа тата икĕ смшăн ĕçлекенсен йышне ÿстерме, электроэнергине тологаана перекетлеме, рационализацилле сĕнÿсене пурнăçа кĕртсе 200.000 тенкĕ перекетлесе хăварма тата ытти нумай ĕçсене пурнăçа кĕртме сăмах панă.

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариатĕнче

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариачĕ, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăван 1944 çулхи май уйăхĕнчи итогĕсене шăхса пухса, Володин юлташ главнăй инженерте ĕçлекен завода иккĕмĕш преми памалла тунă.

Аслă классем те пĕлÿ тĕрĕслевне вĕçлерĕç

МУРКАШ, (Телефонпа, «Чăваш Коммуни» корр.). Районри вăтам шкулсем сулпиннехи пĕлÿ тĕрĕслевне ăнăçлăн вĕçлерĕç. 4 вăтам шкулпа 10-мĕш классенче вĕренекенсенчен Йÿçкасси шкулĕнчи пĕр ача кăна вĕренсе тухайман. Тивĕçри вăтам шкулта 10-мĕш класра вĕренекен 13 ачаран 5-шĕ (Н. Яковлев, Т. Ефименко, Н. Сергеева, Д. Харитонова, Ю. Семенова) отличник аттестачĕсене илнĕ.

Совет Союзĕ тăрăх

Хабаровск крайĕнчи Амăрри вăрмансем хушшинче тусем çинчен юхса анакан Хор шывĕ тăрăх тăста нĕсстре пусланса кайнă вырăнсене Удэгей ялĕ—Гвасюги ларать. Çак нуçстри Хевелтухăçĕнчи ял çыннисем Хĕрлĕ Çар боецĕсене офицерсем валли тĕрлĕрен парне нумай хатĕрлесе пухса янă.

Ÿкерчĕк çинче: тĕрĕ тума питех те ăста ĕçлекенсем — Хабала Кимонкăйла Сулинка Кимонко фронтовиксем валли унтсемпе (урапа тăхăнмалли) перчеткесем тĕрлеççĕ.

БАЙДАЛОВ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Ялсовет председателĕсен курсĕсем

РСФСР-ти 47 облаçпа крайцентрĕсенче ялсовет исполкомĕсен председателĕсен курсĕсем ĕçлеме пуçланă. Çавăн пек курссене мĕнпур облаçсемпе крайсенче тата РСФСР-ти автономиллĕ республикăсенче уçаççĕ. Çитес ик-виçĕ çул хушшинче çавăн пек курссенчен ялсовет исполкомĕсен пур председателĕсем те вĕренсе тухмалла.

Кăçал 7.000 çынна якăн вĕрентмелле. Вĕсем çутĕç, сывлăхи сыхлас ĕç, вырăнти бюджет тата ялхуçалăх тӧлĕмпе кăларнă законсемпе тата совет органĕсен практикипе паллашĕç, финанс хуçалăхне тата делопроизводствăна мĕнле ертсе пымаллине вĕренĕç. Курсра ялсовет председателĕсене ялти организацилле массăллă ĕçĕн ытăвĕсемпе паллаштарасси уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрĕ.

Курссенче квалификациллĕ специалистсем, наука учрежденийĕсен сотрудникĕсем, вырăнти шкулсен преподавателĕсем, республикăсен тата крайсемпе облаçсен совечĕсен исполкомĕсенче ертсе пыракан работниксем вĕрентеççĕ.

Курссенче виçĕ уйăх вĕренмелле. (ТАСС).

Ялхуçалăхĕн аслă шкулĕсене вĕренме илесси

Кăçал ялхуçалăхăн аслă шкулĕсене 10.000 студента якăн вĕренме илмелле. Чи пысăк аслă шкулта — Тимирязов ячĕпе тăракан академире — пур факультетсемпе отделенисене те вĕренме илеççĕ. 1-мĕш курса 750 çынна вĕренме илмелле, ку вăл пĕлтĕрхинчен 200 çын ытларах пулать. Ытти ялхуçалăх шкулĕсене те пĕлтĕрхинчен ытларах илеççĕ.

Воронежри, Харьковри, Днепропетровскри тата ыттиĕ кăларнă ытти хуласенчи аслă шкулсене те илме пуçланă.

Улан-Удэре, Ярославльте тата Буденовскра (Ставрополь крайĕ) çĕнĕ ялхуçалăх институчĕсем уçаççĕ. (ТАСС).

Гомельти паровозсемпе вагонсем юсакан завода юсаса хута яни

Гомельти паровозсемпе вагонсем юсакан завода ăнăçлăн юсаса хута яраççĕ. Нимĕç оккупацийĕ вăхăтĕнче ăна пысăк сиен тунă пуянă.

Завода юсаса хута ямашкăн рабочисем оккупаци вăхăтĕнче нимĕçсенчен пытарса усранă инструментсем — ножовкăсем, кăлатуксем, напильниксем тата ытти ĕç хатĕрĕсем те илсе пынă. Ĕç пĕтнĕ хыççăн железнодорожниксем 80.000 кирпĕч, темиçе пин листа тимĕр хатĕрленĕ. Сталинградри çынсен примерĕпе ку предприятире те, килхуçи хĕрарăмĕсенчен икĕ бригада тунă, вĕсем цехсене юсаса уйă çине тăратас ĕçе активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. (ТАСС).

РЕСПУБЛИКА ТĂРĂХ

ПЕЧĔК ПЬЕСĂСЕМ

Чăваш издательстви, вырăнсенчи драмкружоксене пьесăсем енĕпе пулăшас тесе, вырăсларан куçарса пĕр актлă пьесăсем пичетлесе кăларма тытăнчĕ. Вуннă пьеса куçарнă. Вĕсенчен 5-шĕ пичетленсе тухнă та ĕнтĕ. Вĕсем хушшинче К. Финн çырнă «Çутăлас умĕн», В. Потемкинăн «Ашă тăлăп», Струковăн «Йĕкехÿре тытакан» т. ыт. те. Ку пьесăсенче хамăр çĕршыври çуламлă патриотсен чаплă ĕçĕсене тата нимĕç захватчикĕсен тискерлĕхне кăтартса панă.

Çитес кунсенче татах темиçе пьеса пичетленсе тухать.

КОЛХОЗРИ ПАРК

Вăрнар районĕнчи Анаткас Уравăшри Киров ячĕпе тăракан колхозра кăçал парк тума тытăнчĕç. Парк валли 2 гектар çĕр уйăрнă, унта 1500 тополь, 2.000 тĕп акацилартса хăварнă.

СТЕНА ХАÇАЧĔСЕН КОНКУРСĔ

Канашри вагонсем юсакан заводра июнĕн 10-мĕшĕпе июлĕн 10-мĕшĕ хушшинче стена хаçачĕсен конкурсĕ иртет. Лайăх ĕçлекен стена хаçачĕсен редколлегийĕсене пама 4 преми тунă. 1-мĕш преми 400 тенкĕ, 2-мĕш премии 300 тенкĕ, 3-мĕш преми 200 тенкĕ, 4-мĕш премии 100 тенкĕ пулать.

ПИОНЕРСЕМ ХАНАРА

Çĕрпÿри Культура çуртĕнчи художествăллă пултарулăх коллективĕ темиçе кун хушши Шупашкарта пулчĕ. Вăл коллективра пĕтĕмпех пионерсемпе шкул ачисем тăраççĕ. Коллектив Шупашкарта Пионерсен çуртĕнче концертсем пачĕ, ачасен паркне уçнă ятпа ирттернĕ уявра пулчĕ.

Пĕр ялсоветри яланлăх комиссийĕсен ĕçĕсем

Ялсовет канцелярийĕн таса та çутă пÿлĕмне колхоз активĕ пухăннă. Кунта ĕç кунĕ вĕçленнĕ хыççăн уй-хир бригадисен бригадирĕсем, звеньевойсем, ферма заведующийĕсемпе рядовой колхозниксем. Вĕсем, ялсоветри ялхуçалăх енĕпе ĕçлекен яланлăх комиссин членĕсем, черетлĕ ларăва килнĕ.

Яланлăх комисси руководителĕ — колхоз бригадирĕ депутатка Анастасия Вьюгина лару уçăнни çинчен пĕлтерет. Пурте шăпланаççĕ.

— Паян кун йĕркинче пĕр ыйту — тырпулсене пуçтарса кĕме хатĕрленесси, — тет Вьюгина юлташ.

Ку ыйтупа колхоз председателĕ Журавлев тата бригадирсем тухса-тухса калаççĕ.

Колхоз çуракине вĕçленĕ хыççăнах çум çумлама, тислĕк тăкма, пăрхи çĕртме тума тытăннă. Пур колхозниксем те ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ вĕсем хушшинче ĕçкунĕсен минимумне тултарса пыраймасисем пĕрре те çук.

— Пирĕн умра татах та пысăкрах ĕçсем тăраççĕ — утă çулма тата тырпула пуçтарса кĕртме хатĕрленмелле. Утă çулма тухмашкăн хатĕр мар-ха,—асăрхаттарать ялсовет исполкомĕн председателĕ Степанов юлташ.

— Ырă вăхăт çанасем туптама, лапаткасем хатĕрлеме тытăнмалла, çурласене шăлатгармалла.

Тырпулсене пухса кĕме хатĕрленес ыйтăва тĕплĕн сÿтсе-явнă хыççăн, лару татăклă решени йышăнать: июнĕн 20-мĕшĕччен пур бригадăсен те çава-çурласем, крепĕсем, урапасем, жнейкăсем хатĕр пулмалла.

Лару хупăнать. Колхоз активĕ — ялхуçалăх енĕпе ĕçлекен яланлăх комисси членĕсем хастарлă ĕçлес шухăш-кăмăлпа килĕсене тухса-тухса каяççĕ.

Кунта эпир Кÿлхĕрри ялсоветĕ çумĕнчи ялхуçалăх енĕпе ĕçлекен яланлăх комиссийĕн пĕр ларăвне илсе кăтартрăмăр. Кун пек ларусем ытти яланлăх комиссисен те тăтăшах пулса иртеççĕ. Вăл ларусенче кирлĕ ыйтусене сÿтсе-яваççĕ. Çак вара ялсовет исполкомне хăйĕн умĕнче тăракан задачăсене вăхăтра та ăнăçлăн пурнăçласа пыма пулăшать.

Калас пулать, Кÿлхĕрри ялсоветĕ — районра малта пыракансенчен пĕри. Çурхи сăпăкри финанс планне вăл 5 уйăх хушшинчех тултарнă, районри куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялава илнĕ. Виççĕмĕш военнăй заема пĕр кун хушшинче 275 пин тенкĕлĕх çырăнса укçине те çийĕнчех тÿлесе татнă. Ялсовет государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçласа пырать, аш-какай памалли плана ытлашшипех тултарнă.

Ялсоветĕнчи «Трактор» колхоз та кăтартуллăн ĕçлет. Çуракине лайăх ирттернĕшĕн ăна районри Хисеп хăми çине кĕртнĕ, иртнĕ çулта лайăх ĕçленĕшĕн колхоз председательне Журавлев юлташа Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăланă.

Кÿлхĕрри ялсоветĕ фронтовиксен çемьисене пулăшас, ĕççыннисене çар ĕçне вĕрентес ĕçсене те начар мар организациленĕ. Ку енĕпе уйрăмах оборона комиссийĕн лайăх ĕçне палăртмалла, руководителĕ депутат Иван Колбасов. Комисси членĕсем кашниех ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Вĕсем тăрăшнипе кăçал хĕлле фронтовиксем патне вуншар мăшăр алшăш-носкисем, çĕлĕксем, сăмсăсем тата ытти парнесем ярса панă, допризывниксене çар ĕçне вĕрентес шутăшнă тата 3 допризывника трахомран сыватнă. Ялта осоавиахим организацийĕ пур, унта вуншар çамрăк çар ĕçне вĕренет.

Фронтовиксен çемьисене пулăшас ыйтăва яланлăх комисси темиçе хутчен хăйĕн ларăвĕнче сÿтсе-явнă, татăклă решенисем йышăннă. Çапла, сăмахран, хĕлле фронтовиксен çемьисене М. Фоминана, Е. Муравьевăна, Туйкина вутă турттарса панă, çураки вăхăтĕнче çĕрулми, тырă парса пулăшнă. Акă, вăрçă инвалидне А. Киселева, фронтовик арăмĕсене Л. Барановăна, Е. Гладковăна, фронтовик ашшĕне Т. Туйкина вăрлăхлăх 3-шер пăт çĕрулми панă. Кунсăр пуçне тата фронтовиксен çемьисене пулăшу кассинчен кашни уйăхрах тырă, сăнăх парса тăраççĕ.

Яланлăх комиссисем çакăн пек ĕçлесе пыни ялсовет исполкомĕ вĕсене кирлĕ пек ертсе пынинчен килет. Исполком председателĕ Степанов юлташ яланлăх комиссисен ĕçĕсемпе тăтăшах интересленет, вĕсене ĕçре пулăшса пырать. Комиссисем кашни уйăхрах çирĕплетнĕ планпа ĕçлеççĕ. Ялсовет исполкомĕ вара плана мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслесе тăрать. Ялсовет исполкомĕ хăй те çирĕп план тăрăх ĕçлет.

— Яланлăх комиссисем ĕçре пысăк пулăшу параççĕ. Тĕрĕссипе каласан, эпĕ пĕтĕм ĕçе вĕсемпе туса пыратăп, — тет исполком председателĕ М. Степанов юлташ.

Х. ЛИСИН.
(Хамăр корр.).

Калинино районĕ. Кÿлхĕрри ялсоветĕ.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен çарĕсем Çурçĕр Франције пырса кĕни çинчен Сталин юлташ каланă пирки ют çĕршывсенче мĕн çыраççĕ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксем Çурçĕр Франције десант антарни çине мĕнле пăхатăр тесе «Правда» корреспонденчĕ ыйтнине хирĕç Сталин юлташ панă ответа ирхине тухнă хаçатсем курăнмалли вырăнта пичетлесе кăларнă. Сталин юлташ «Правда» корреспондентне панă ответа Америкăри радио та анлăн сарнă. Радиокоментатор Хенле çапла калать: «Историри чи вăрăм фронтра çав тери пысăк операцисем тăвакан çара ертсе пыракан çын çапла калани вăл питĕ мухтанлă пулса тăрать». Радиокоментатор Шуберт хăйĕн çак шухăшне каласа парать: Нормандие пырса кĕнине Сталин çав тери мухтани тата Англипе Америкăн çар руководителĕсем ĕç ăнассине шанса тăни Нормандире часах кунтан та пысăкрах ĕçсем пулассине пĕлтерет.

ЛОНДОН, июнĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Сталин юлташ «Правда» корреспондентне панă ответа Англи хаçачĕсем анлăн сарнă. «Таймс» хаçат хăйĕн умстатьинче Сталин юлташăн отвечĕ çинчен çапла çырать: «Вăл десант антарнипе питĕ хĕпĕртени çинчен калать, ăна çĕр çинчи вăрçăра калама çук пысăк çĕнтерÿсем тунă аслă халăхăн çулпуçĕ калать. Çакă вăл тĕрлĕ йышши çарсене пĕрле çыхăнтарса тунă кампанин хăйне уйрăм йывăрлăхĕсене питĕ лайăх ăнланнине пĕлтерет, вăл çав кампанин участникĕсене çĕнĕрен хавхалантарса ярĕ».

«Ивнинг стандарт» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырать: «Сталин Маршалăн сăмахĕсем Англири кашни çынна савăнтараççĕ, вĕсем аслă çар кампанийĕшĕн ответлă пулса тăракан çынсене хавхалантарĕç. Çав сăмахсенче хавхаланупа ырă кăмăл çитмеççĕ тесе никам та ÿпкелешмĕ, мĕншĕн тесен вăл сăмахсене Сталинград патĕнче çĕнтернĕ çын каланă. Сталин хăйĕн сăмахĕсенче ĕлĕкрех иккĕмĕш фронт çинчен пĕтĕм чĕререн каланă пекех, çак сăмахсене те вăл пĕтĕм чĕререн каланă».

Хаçат çакна палăртать: «Сталин Маршалăн сăмахĕсем аслă çитĕнĕве ырă кăмăлпа тата тивĕçлипе мухтани çеç пулса тăмаççĕ, вĕсем тата малашнехи пурнăç тĕлĕшпе аслă сăмах пани пулса тăраççĕ».

ОТТАВА, июнĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Канадăри радиостанцисем, çавăн пекех тата Оттавăра, Торонтора, Монреальте каç тухнă хаçатсем союзниксем Çурçĕр Франције десант антарни çине мĕнле пăхатăр тесе «Правда» корреспонденчĕ ыйтнине хирĕç Сталин панă ответа курăнмалли вырăнта пичетлесе кăларнă.

ШВЕЦИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ГЕРМАНИЕ ТЕПĔР ХУТ ПРОТЕСТ ПАНĂ

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Швецин ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви çапла пĕлтерет: майăн 14-мĕшĕнче Вентопилс çывăхĕнче (Латви) нимĕç истребителĕсем шведсен самолетне персе ÿкернĕ пирки июнĕн 10-мĕшĕнче Берлинра Швеци правительствин çĕнĕ протестне панă. Протестра çапла каланă: Швеци правительстви Германи правительствине хăй вăхăтĕнче панă протеста тата тепĕр хут çирĕплетет, çынсем вилнипе тата япаласем пĕтнипе пулнă тăкаксене саплама ыйтмалли правăна хăйĕнче хăварать.

Çак протеста Берлинра акă мĕн пирки иккĕмĕш хут панă. Çак ĕç пирки Швеци правительстви Германие малтанхи хут майăн 30-мĕшĕнче протест панă пулнă. Анчах та Германи правительстви çав протестра каланине йышăнман. Çавăнпа вара Швеци правительстви халĕ иккĕмĕш хут протест панă.

ТУРЦИН ЮТ ÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН МИНИСТРĔ ВЫРĂНТАН ТУХНĂ

АНКАРА, июнĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Анкарари радио çапла пĕлтернĕ: паян ирхине Турци правительствин ларăвĕ пулнă. Ларăва премьер-министр Сараджоглу председатель пулса ертсе пынă. Правительство Турцин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Менеменджиоглу юлашки кунсенче тытса пынă политикăна ырламан. Вара Менеменджиоглу вырăнтан тухнă. Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн обязанноçне вăхăтлăха премьер-министр Сараджоглу туса пырать.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ГЕРМАНИ ТЕРРИТОРИЙĔНЧЕ ÇАПĂÇМА ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). «Морген Тиднинген» хаçат çапла çырать: «Хальхи вăхăтра нимĕç влаçĕсем Германи территорийĕнче çапăçма хатĕрленме пуçланă. Сăмахран, Эмденра çапла пĕлтернĕ: тăшман çарĕсем килсе кĕрсен, ун çинчен халăха хăйне уйрăм сигнал парса пĕлтереççĕ, тенĕ. Ольденбургри халăха тăшман тапăнсан хуларан тухса кайма хушнă. Бременра пурăнакан çынсене, хула районне парашютистсем ансан, Балтика тинĕсĕ хĕррине, уйрăмăн илсе кăтартсан — Данциг хулине куçармалла тунă. Тăшман тапăнакан хуласенче отпускра пурăнакан çар çыннисене тинĕс çар влаçĕсем патне пырса, вĕсене хулана хÿтĕлес ĕçре пулăшма хушнă.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ ЯПОНИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, июнĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ каланă тăрăх, США çар министерстви çапла пĕлтерет: Америкăн тинĕс-çар вăйĕсен 20-мĕш соединенинчи «Вĕçекен крепость Б-29» йышши хăватлăран та хăватлă бомбардировщиксем Токио хулине тата Японин ытти районĕсене тапăннă.

Америка çарĕн сывлăш-çар вăйĕсен начальникĕ Арнольд çапла каланă: çавăн пек самолетсемпе тин çеç усă курма тытăннă-ха. «Б-29» йышши бомбардировщиксем вĕсем заводран вĕççе тухсанах çапăçăва кĕрсе каяççĕ. Çак самолетсем мĕн чухлĕ усăлли пăртак тăрсан тин лайăх палăрĕ. Хăйне мĕн кĕтнипе тăшман çакăнтан курса тăтăр ĕнтĕ».

АМЕРИКА ÇАРĔСЕМ МАРИАН УТРАВĔСЕМ ÇИНЕ ПЫРСА АННИ

ЛОНДОН, июнĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнă йĕркепе çапла пĕлтернĕ: Америкăн йышлă вăйĕсем Мариан утравĕсен ушкăнĕнчи Сайпин утравĕ çине аннă. Çарсене утрав çине антарнă чухне линкорсемпе крейсерсем тата эсминецсем питĕ вăйлă персе хÿтĕлесе тăнă.

Союзниксен экспедицилле вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтерни

ЛОНДОН, июнĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн паян ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Союзниксен çарĕсем тăшманпа фронтăн пур участокĕсенче те çапăçаççĕ. Пуринчен те хаяртарах çапăçусем Тарантан, Монтебур тата Кап секторĕсенче пыраççĕ. Авиадесант çарĕсем нимĕçсем çĕнĕрен Карантан хулине туртса илме хăтланнине ăнăçлă сирсе янă, халĕ вĕсем çак хуларан кăнтăралла куçса пыраççĕ. Çавăн пекех вĕсем Ле Саблонбот çывăхĕнче те (Карантанран 8 километр хĕвеланăçнерехре) хĕвеланăçнелле куçса пыраççĕ. Кан тата Тилли-Сюр-Сель секторĕсенче çаплах танксен хаяр атакисемпе контратакисем пулса пыраççĕ. Плацдармсем ăнăçлăн аслăланса пыраççĕ. Çарсемпе хĕçпăшал антарасси вăйланнăçемĕн вăйланса пырать.

Июнĕн 14-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен тата каçпа та союзниксен авиацийĕ Котантен çурутравĕ çинче тăшманăн çулйĕрĕсемпе транспорт колоннисене атакăланă, союзниксен тип çĕр çинчи çарĕсене пулăшса пынă. Çавăн пекех тата чугун çулсем çине те бомбăсем пăрахнă.



Каçхи йывăр бомбардировщиксем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, торпеда катерĕсене, Гавр хулинчи çыранри сооруженисене, паха чугун çул узелĕсене чылайĕшне, мототранспорта тата тăшман çарĕсем пухăнса тăнă вырăнсене атакăланă. Туллимар даннăйсем тăрăх, июнĕн 14-мĕшĕнчи кăнтăртан пуçласа сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 24 самолетне пĕтерсе тăкнă. Союзниксен 14 истребителĕ хăйсен базисене каялла таврăнман.

Союзниксен авиацийĕ нимĕçсен линийĕсем хыçĕнчи объектсем çине 1.485 тонна бомба пăрахнă

ЛОНДОН, июнĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Америка экспедицилле сывлăш-çар вăйĕсен штабĕ пĕлтерет: «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» йышши бомбардировщиксен питĕ пысăк соединенийĕсем июнĕн 15-мĕшĕнче ирхине Францири йышлă объектсене, çав шутра чугун çул узелĕсене, кĕперсене, аэродромсене тата авиаци завочĕсене тапăннă. Бомбардировщиксене истребительсем хÿтĕлесе пынă, вĕсем вăрçă объекчĕсене пенĕ. Илнĕ хыпарсем тăрăх, çав операцисене 1.500 самолета хут хутшăннă. Июнĕн 14-мĕшĕпе 15-мĕш хушшинчи çĕрле 2.400 бомбардировщиксем тата истребительсем Францири объектсем çине бомбăсем пăрахнă. Германи линийĕсем хыçĕнчи объектсем çине 1.485 тонна бомба пăрахнă. Штурмласа механизациленĕ 50 транспорта, çав шутра 20 паровоза, пĕтерсе тăкнă. Ли Манри аэродром çине те бомбăсем пăрахнă. Çав операцисене ракета пăрахмалли хатĕр лартнă «Тайфун» самолетсем те хутшăннă.

ДЕ ГОЛЛЬ ГЕНЕРАЛ НОРМАНДИЕ ПЫНĂ

ЛОНДОН, июлĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Июнĕн 14-мĕшĕнче Нормандие де Голль генерал çитрĕ тесе пĕлтерет Рейтер агентстви.

ПИРЕНЕЙ ТĂВĔСЕМ ÇИНЧЕ ФРАНЦУЗ ПАРТИЗАНĔСЕМ КĔРЕШЕÇÇĔ

ЛОНДОН, июнĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Анагри Пиреней тăвĕсем çинче (Франци) француз партизанĕсен йышлă ушкăнĕсем кĕрешеççĕ. Июнĕн 12-мĕшĕнче Олорон патĕнче партизансем нимĕçсен тавар турттарса пыракан поездне ÿпĕнтерсе янă.

АЛЖИР, июнĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Франци чиккинчен илнĕ хыпарсем тăрăх, Пантальс районĕнче (Кот Дьор департаменчĕ) нумаях пулмасть гестаповецсен генерел-майорне Бернера, унпа пĕрле пулнă офицерсене тата унăн хуралне тапăннă. Çак операцире француз партизанĕсен самаях пысăк отрячĕ пулнă. Тытăçура пур гитлеровецсене те вĕлерсе пĕтернĕ, пĕри кăна тарса хăтăлма ĕлкĕрнĕ. Нимĕç генералне партизансем тыткăна илнĕ. Çав генерала Францин оккупантсене хирĕç тăракан организацийĕн çар сучĕ суд тунă. Суд ăна персе пăрахмалла тунă. Суд приговорне çавăнтах пурнăçа кĕртнĕ.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: фронтăн Адриатика участокĕнче союзниксен çарĕсем çаплах наступлени туса пынă, Пескара шывĕ хĕррине çитиччен пĕтĕм территорине хăйсен аллинче çирĕплетсе хăварнă. Римран çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем Терни хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехри Нарни хули патне çывăхарса пыраççĕ, Тибр шывĕнчен хĕвеланăçнерехре Баньореджо хули патне çывăхарса çитнĕ, кунта ĕнтĕ икĕ кун хушши йывăр çапăçусем пыраççĕ. Союзниксен çарĕсем Больсен кÿллин хĕвеланăç тата хĕвелтухăç енĕсенче малалла куçнă. Тирренски тинĕс хĕрринче Бетелло хулинчен кăнтăртарахра тăшман вăйлă хирĕç тăнă. Разведка отрячĕсем çурçĕрелле куçса пыраççĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Ливорно портĕнчи суднисене, çавăн пекех тата Çурçĕр Италин вăтаçĕрти пайĕнчи шоссе çулĕсемпе чугун çул кĕперĕсене тата тăшманăн Италири ытти объекчĕсене пыра-пыра тапăннă.

ЛОНДОН, июнĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: юлашки виçĕ кун хушшинче Италире тăшман вăйлă хирĕç тăрса çапăçма пуçларĕ, анчах та союзниксен армийĕсем тăшман хирĕç тăнине çĕнтерне. Пĕтĕм фронтĕпех чылай пысăк çитĕнÿсем тунă. Фронтăн Адриатика участокĕнче çарсен çĕнĕ чаçĕсем Салине шывĕ урлă каçнă.

Разведка отрячĕсем Аквила хулине кĕнĕ. Фронтăн вăтаçĕрти участокĕнче союзниксен çарĕсем Нарни хулине туртса илнĕ хыççăн Терни хули патне пырса тухнă. Орвието ятлă çулсен паха узелне йышăннă. 74-мĕш номер шоссе çулне халĕ пĕтĕм тăршшĕпех тăшмантан тасатнă.

Ĕнер йывăр бомбардировщиксем Будапешт районĕнчи тата Çурçĕр Югославири нефть тасатакан заводсене тапăннă. Ытти соединенисем тăшман çарĕсем çине, унăн вăрçă объекчĕсем çине тата Будапешт патĕнчи аэродром çине бомбăсем пăрахнă.

Иртнĕ каç союзниксен самолечĕсем тăшманăн Ниш хулинчи (Югослави) объекчĕсене тапăннă.

АМЕРИКА БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, июнĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Америка авиацийĕн Европăри стратегиллĕ вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтернĕ: июнĕн 14-мĕшĕнче ирхине «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» йышши бомбардировщиксен соединенийĕсем (пĕтĕмпе шутласан 750 самолетран пуçласа 1000 самолет таран) Франципе Бельгири йышлă аэродромсемпе кĕперсене, çавăн пекех тата Эммерих хулинчи (Германи) нефтьрен тĕрлĕ япаласем тăвакан завода тапăннă. Ле Буржри, Крейри, Этампри, Мандезирти тата Шатоденри (Франци), çавăн пекех тата Брюсельти, Мельсберкри тата Эйдховенри (Бельги) аэродромсем çине бомбăсем пăрахнă, усă çанталăк тăнă. Июнĕн 14-мĕшĕнче тул çутăлса килнĕ чухне «мэродер» тата «хэвок» йышши бомбардировщиксен питех те пысăк соединенийĕсем Францири çулйĕрсемпе ытти вăрçă объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, июнĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнă йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен питех те пысăк соединенийĕсем нимĕçсем оккупациленĕ территорисене тапăннă.

Акăлчансен «Москито» йышши бомбардировщикĕсен соединенийĕ синтетически горючи производствин центăрĕ çине — Рур облаçĕнчи Гельзенкирхен хули çине бомбăсем пăрахнă. Пур самолетсем те хăйсен базисене таврăннă.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Канашри финанспа экономика техникумĕ пĕрремĕш курса вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Техникум финанс органĕсенче ĕçлеме бюджетпа налог инспекторĕсемпе бухгалтерĕсене хатĕрлет.

Техникумра виçĕ çул вĕренмелле.

Техникума 14 çултан пуçласа 25 çула çитнĕ çынсене, вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекенсене илеççĕ.

Заявленисене июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа августăн 20-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Вĕренме кĕмелли экзаменсем августăн 21-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче çак предметсемпе пулса иртеççĕ: вырăс чĕлхипе, литературăпа, математикăпа тата Конституципе.

Отличниксене экзаменсĕрех илеççĕ.

Вĕренекенсене уйăхне 80 тенкĕрен пуçласа 150 тенке çитиччен стипенди параççĕ. Ытти çĕртен килнисене общежитие е хваттере вырнаçтараççĕ.

Вĕренекенсене çăкăрпа ытти продуктсем иккĕмĕш категорири рабочисен нормипе параççĕ. Столовăй пур.

Адрес: г. Канаш, Комсомольская, 9.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

паянтан, июнĕн 14-мĕшĕнчен, пуçласа кунсеренех

„СЕВЕРНАЯ ЗВЕЗДА"

ятлă американецсен çĕнĕ, саслă илемлĕ фильмне кăтартать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Билетсем малалли кунсем валли те ирхине 10 сехетрен пуçласа сутаççĕ.

Чăваш АССР Наркомлесĕн «Чăвашлесдрев» тресте çакăн пек работниксем кирлĕ: йывăç çурас тата каскалас ĕçе пĕлекен инженерсемпе техниксем, главнăй механик, технормировани инженерĕ, главнăй бухгалтер, товаровед, шофер, конюх тата конторăра ĕçлекен работниксем. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Урицкого, 36, Чувашлесдрев.

Шупашкарти кинотеатра администратор, уборщица, дворник, художник кирлĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарăн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00195 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.